ХЫПАР

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

1999 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

15 (812) №, 2015, апрель/ака, 16 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне/

### ПАХЧАÇИМĔÇ

| *Килограмм* | *тенкĕ* |
|---|---|
| Çĕрулми | 27-32 |
| Купăста | 40-50 |
| Сухан | 40 |
| Кишĕр | 45-50 |
| Ыхра | 150-170 |
| Хăяр | 80-160 |
| Хĕрлĕ кăшман | 40 |
| Помидор | 80-160 |
| Пылак пăрăç | 100-180 |
| Тăварланă хăяр | 100-120 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 100-120 |

### УЛМА-ÇЫРЛА

| | |
|---|---|
| Панулми | 50-120 |
| Иçĕм çырли | 120-200 |
| Апельсин | 70-120 |
| Лимон | 80-120 |
| Банан | 70-90 |
| Шур çырли | 300 |
| Кĕтмел çырли | 250 |
| Мандарин | 70-120 |
| Гранат | 80-120 |
| Сырлан | 200 |

### ÇĂНĂХ-КĔРПЕ

| | |
|---|---|
| Тулă çăнăхĕ | 29 |
| Вир кĕрпи | 32 |
| Хура тул -»- | 56-60 |
| Тулă -»- | 32 |
| Манна -»- | 32 |
| Рис -»- | 52-56 |
| Пăрçа | 30 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 46-50 |
| Пыл | 350-400 |

### АШ-КАКАЙ

| | |
|---|---|
| Ĕне ашĕ | 200-350 |
| Сысна ашĕ | 200-350 |
| Сурăх ашĕ | 200-350 |
| Пĕвер | 150-180 |
| Пӳре | 70-80 |
| Чăх | 180-200 |
| Кролик | 350 |
| Салă | 100-200 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 50-68 |

### ПУЛĂ

| | |
|---|---|
| Шăнтнă скумбри | 180-200 |
| -»- сельдь | 160 |
| Мойва | 160 |
| Горбуша | 300 |
| Шăла пулă | 180-250 |
| Çупах | 100 |
| Карп | 180-200 |
| Çуйăн | 200-300 |
| Çăрттан | 150 |

### СĔТ-ТУРĂХ

| | |
|---|---|
| Сĕт /литр/ | 38 |
| Хăйма | 200 |
| Тăпăрч | 200-220 |
| Сыр | 200-300 |
| Услам çу | 200 |



# "Ылтăн" улăм пĕрчи

Хула урамĕпе утаттăм. Ума кутамкка çакнă арçын тухрĕ. Кутамккинчен улăмран çыхса тунă илемлĕ лили чечекĕсем, каллăсем хĕвел шевлипе ылтăн тĕслĕн йăлтăртатаççĕ. Тепĕр 3-4 эрнерен тепре тĕл пултăм ăна. Хальхинче сăмах хушмасăр чăтаймарăм. Арçын калаçăва хапăлскер пулчĕ – ĕçĕпе, хăйсемпе паллашма ыйтсан телефон номерне çырса пачĕ.

Курочкина Вера Анатольевна Шупашкарти 7-мĕш вăтам шкулта «Асамат» ӳнер студине 3 çул ертсе пырать. Кунта ачасем тĕрлĕ алă ĕçне вĕренеççĕ. «Улăм пĕрчипе ĕçлесси ансат япала мар. Ача аллисене малтан тĕрлĕ ĕçе хăнăхтармалла. Халĕ акă, хутран Мăнкун çăмартисем касса кăларатпăр. Мартăн 8-мĕш тĕлне тĕслĕ хутран хитре чечексем, открыткăсем тунăччĕ» - ăнлантарать студи ертӳçи Вера аппа. Мăшăрĕ, Павлов Василий Геннадьевич ăна студине аталантарма пур енлĕн пулăшса пырать.

**– Ăçта вĕреннĕ эсир улăм пĕрчипе çыхас ĕçе? – ыйтатăп иккĕшĕнчен те.**

– Эпир Васьăпа иксĕмĕр те пĕр вăхăтрах Мускавра Патшалăх кинематографи институтĕнче мультипликаци уйрăмĕнче вĕрентĕмĕр. Унтах паллашнă та. 1977 çулта Мускавра Беларуç халăхĕн ӳнер, алĕçĕсен куравĕнче пĕрремĕш хут улăм пĕрчинчен çыхнă ĕçсемпе паллашнăччĕ,çавăн чухнех чуна кĕрсе вырнаçрĕ вăл. Çавнашкал ĕçсемпе кăсăкланса кайрăмăр. Чи вăйлă маçтăрсем паян кунччenex Беларуçре тесе шухăшлатпăр. Вĕсене çитекен халĕ те çук. Тĕрĕссипе, улăмпа çыхасси чăвашра та пулнă ĕлĕкрех. Каярах ку ăсталăха чăвашсем маннă, тĕрĕ ăсталăхĕ вара аван аталаннă.

Беларуçе мультипликаци ĕçĕсемпе кайсан улăм теттесем ăсталакансемпе паллашма шутларăмăр. Вăл вăхăт тĕлне маçтăрсен ячĕсене кĕнеке урлă йăлтах пĕлеттĕмĕр. Ăстасене часах тупрăмăр. Мĕн тĕлĕнтерчĕ: маçтăрсем йăлтах пĕр çемьерен иккен, династи темелле-тĕр хальхилле. Минскри хула хваттерĕ ялти пӳрте çаврăннă. Йăлтах улăмран унта, кĕлтесем, теттесем… Виçĕ çулалли ача улăм лаша хӳрине хачăпа «тикĕслет».

Çавăн чухне пире пĕрремĕш мастер-класс пачĕç: çыхас мелсемпе лайăхрах паллаштарчĕç, пĕр курупка улăм тетте тĕслĕхĕсем парнелерĕç. Кайран эпир çав курупкапа вунă çул çĕршыв тăрăх çурерĕмĕр Шупашкарта тĕплениччен.

Шупашкарта мультстуди уçма ĕмĕтленеттĕмĕр, сахал мар тăрмашрăмăр. Кайран çĕршывра йывăрлăхсем пуçланчĕç – мультстуди кама кирлĕ пултăр?

**– Шупашкарта ăçта вырнаçрăр?**

– Пĕр вăхăт ӳнер училищинче вĕрентнĕччĕ. Пурăнма Шупашкарăн кăнтăр-хĕвеланăç районне вырнаçрăмăр. Ун чухне кунта çуртсем питĕ сахалччĕ. Йĕри-тавра курăк-çаран, йывăç- вăрман, шурлăх.

**– Хăвăр ăçтан вара?**

– Вера Хусанран, эпĕ хамăр тăрăхранах.

**– Улăм тетте тетпĕр те, чăннипе мĕнле курăксенчен çыхатăр тата ăçта ĕçлетĕр-ха чун киленĕçпе?**

– Килте, дачăра, шкулти студире ачасемпе пĕрле. Тĕрлĕ курăкпа усă куратпăр. Ыраш, тулă, хăмăш, хăях, костер…

**– Пĕр япала ăсталама мĕн чухлĕ вăхăт кирлĕ?**

– Ку ыйтăва пĕр сăмахпа хуравлаймăн. Çыхасси – пĕр ĕç. Ун умĕнхи ĕç вара куçа курăнмасть. Çулла курăка кирлĕ вăхăтра пуçтарса типĕтмелле. 20 пысăк кĕлте хатĕрлетпĕр, ăна суйламалла: вăрăмăшĕпе, тĕсĕпе, хулăнăшĕпе, ытти енĕпе. Кашни улăм пĕрчине 5 хутран кая мар тытатăн ĕçе кĕртиччен. Кирлĕ температурăра упрамалла. Çыхас умĕн вĕри шывра тытса çемĕçтермелле.

**– Ытларах мĕн ăсталама кăмăллатăр, вĕсемпе мĕн тăватăр?**

– Эпир çыхакан тĕслĕхсем йăлтах хамăр шухăшласа кăларнисем. Лили чечекне 3 çул лайăхлатса якатса пытăмăр хальхи тĕслĕх патне çитиччен. Хăшне-пĕрне ыйтнипе тăватпăр. «Вĕлле хурчĕ ăсталаймастăр-и? Кĕçех уява вĕсемпе хутшăнмалла» –тесе ыйтрĕç пĕринче. Ăна малтан ăсласа тупмаллаха.Çĕрĕ-çĕрĕпе ĕçлесе хатĕрлесе патăмăр ыйтнă вăхăт тĕлне. Кашни тĕслĕхĕн хăйĕн историйĕ. – Кăмăллăн калаçать «ылтăн» вĕлле хуртне кăтартнă майăн Вера Анатольевна. –Пуç кăшăлĕ, шăнкăравсем, каллă чечекĕсем, тĕрлĕрен панно…

➡ 2 стр.

## Уй-хирти кайăксем

### Тăри

Тăри юррине илтмен çын çук та пулĕ ялта. «Ĕçле, ĕçле, ĕçле – çи-и-и! Ирпе ирех тăтăр-и?!» – тесе юрлать тет çак пĕчĕк ĕçчен кайăк. Унăн сасси ирхине çӳл тӳперен аннăн илтĕнет. Йĕри-тавра уй-хир, çаран, тăри сасси тӳперен ĕçчене йыхăрать. Юрăçсем темиçен чухне тӳпе хăй юрланăн туйăнать.

Тăри – çерçирен кăшт пысăкрах кайăк. Вĕсем çирĕп те пиçĕ кĕлеткеллĕ, урисем кĕске, çĕр çийĕн çӳреме меллĕ йĕркеленнĕ. Çунаттисем вăрăм та сарлака. Тĕсĕ çерçи тĕслĕрех, кăшт тĕксĕмрех çеç. Тăри йăвине хирте çĕр çинче çавăрать. 3-6 çăмарта туса чĕпĕ кăларать. Хурт-кăпшанкăпа, ӳсентăран вăррисемпе тăранса пурăнать. Тăри кĕркунне ăшă енне вĕçсе каять, çуркунне юр ирĕлсе пĕтиччenex хăйĕн тăван çĕршывне таврăнать. Малтан ăшă енчен тăри аçисем вĕçсе килеççĕ, юртан тасалнă лаптăксене ушкăнпа пуçтарăнса хĕвелпе ăшăнаççĕ, каярах тăри амисем таврăнаççĕ. Вĕсем йăва çавăрма юрăхлă вырăн шыраççĕ, аçи вара хăйĕн лаптăкне сыхласа юрă шăрататать. Çу уйăхĕн пуçламăшĕнче йăва çавăрса çăмарта тума пуçлаççĕ. Икĕ эрнерен тĕксĕм чăпар çăмартасенчен куçĕ уçăлман çара чĕпĕсем тухаççĕ. Чĕпсем пит хăвăрт ӳсеççĕ, 10 кунран йăваран тухаççĕ, виç-тăват эрнерен вĕçме пуçлаççĕ, хăйсем тĕллĕн тăранса пурăнма тытăнаççĕ. Çĕртме уйăхĕнче тăри амисем тепĕр хутчен çăмарта туса чĕпĕ кăларма пултараççĕ. Çуллахи чĕпĕсем те хăвăрт ӳсеççĕ. Авăн уйăхĕнче тăрисем хăйсен çемйисемпе Европăн кăнтăр тăрăхĕсене хĕл каçмашкăн куçма пуçлаççĕ.



## Кун мĕнпе паллă

**Апрель, 17** – Гемофили чирĕпе кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери кун.

**Апрель, 18** – Тĕнчери палăксене, истори пĕлтерĕшлĕ вырăнсене палăртмалли пĕтĕм тĕнчери кун.

**Апрель, 19** – Мăнкун эрни вĕçленет.

**Апрель, 22** – Пĕтĕм тĕнчери «Çĕр кунĕ» акци иртет. Этемлĕх çĕре упрамаллине асра тыттăр тесе йĕркеленĕ /ЮНЕСКО, 1999 ç./.

## Вулакансем ыйтнипе

### Тĕне кĕртнĕ-ши мана?

**Турра нумаях пулмасть ĕненме пуçларăм. Мана тĕне кĕртнĕ-ши – ку таранччен çакăн çинчен шухăшламан та. Атте-аннерен нихăçан та ыйтман, халĕ вĕсем манпа пĕрле мар ĕнтĕ... Мана шыва кĕртнĕ е çук – мĕнле пĕлмелле-ши? Çакна пĕлме май килмерĕ пулсан иккĕмĕш хут тĕне кĕме юрать-и?**

**Евгений НИКОЛАЕВ.**
Çĕрпӳ районĕ.

"Иккĕмĕш хут" тĕне кĕме юрать. Священникăн çав вăхăтра çапла каламалла: "Тĕне кĕмен пулсан Евгений тĕне кĕрет". Тĕне кĕме сирĕн тĕплĕн хатĕрленмелле: чиркӳ йăли-йĕркине, кĕлĕсене пĕлмелле. Ачасем валли кĕскетсе кăларнă Библие те пулсан вуламалла. Пурнăç тăршшĕпех ирхине тата каçхине кĕлтумалла, юнкунпа эрнекун типĕ тытмалла, Сăваплă Çырăва /Священное Писание/ тата тĕн литературине вуламалла. Çылăх каçарттарса Турă юнне ăша хывмалла. Эсир мăшăрланнă пулсан арăмăрпа венчете тăрăр, ачăрсене тĕне кĕртĕр, Турра ĕненме вĕрентĕр.

### Каюрана хăратма

**Пахчара каюрасем ĕрчесе кайрĕç. Çерем çинче те, çĕрулми ани çинче те. Вĕсенчен хăтăлмасан кăçал нимĕн те туса илеймĕпĕр. Канашпа пулăшаймăр-ши?**

**Римма КАЛИНИНА.**
Етĕрне районĕ.

Пахчара каюрасем чăн-чăн сăтăрçăсем пулса тăраççĕ. Вĕсем ӳсентăран тымарĕсене сиенлеççĕ, çĕре чаваççĕ. Алтнă туннельсем çумăр хыççăн ишĕлеççĕ те пахча кукăр-макăр йĕрсемпе тулать. Йăрансем пăсăлаççĕ: ăçта мĕн акнине те уйăраймăн. Тĕрĕссипе, каюрасем тымарсене çимеççĕ, тăпрари хурт-кăпшанкăпа, ăмансемпе тăранса пурăнаççĕ. Килти пахчари каюрасенчен тĕрлĕ наркăмăшпа усă курмасăрах хăтăлма тăрăшмалла. Тĕрлĕ имçампа яланах усă курсан пахчаçимĕçре пестицид нумай пухăнать. Ку вара çав çимĕçе çиекеншĕн пачах та усăллă мар.

● Каюра хăшпĕр ӳсентăран шăршине юратмасть. Пахчара тĕрлĕ вырăна сухан, ыхра, пăрçа тата нимĕç пăрçи /бобы/ лартма юрать. Вĕсем ӳсекен вырăна каюра пымасть.

● Пахча 20 соткăран пысăкрах пулсан каюрапа хальхи вăхăтри технологисемпе кĕрешме пулать. Ку, тĕрĕссипе, ансатрах кăна мар, йӳнĕрех те пулĕ. Мĕншĕн тесен каюрана наркăмăшлама хăтланса нумай чухне тăпрана сиенлетпĕр.

● Пахчари каюрана хăратма пулать. «Антикрот» тата «Сонар» ятлă приборсем ăна хăратакан сасă кăлараççĕ. Приборсем йĕри-тавраллах çак чĕрчунсене хăратаççĕ. Çавăнпа ăна анаваррине çĕр çине вырнаçтармалла. Прибор батарейсемпе ĕçлет. 4-5 уйăхран батарейăсене улăштармалла.

Çавăн пекех «ЭкоСнайпер» текен прибор та каюрасене, шăшисемпе йĕкехӳресене хăратса ярать. Прибор кăларакан сасă пулăшнипе 3-4 эрнеренех каюраран хăтăлма пулать. Анчах астăвăр. Прибора вăрах вăхăт ĕçлеттермесен каюрасем каллех таврăнма пултараççĕ.

● Каюраран тасатнă лаптăка чикĕлеме пулать. Лаптăк тавра вĕтĕ пралук çетка 50 см тарăнăш чавса çĕр çийĕн 15 см хăварса лартса тухмалла. Ку, паллах, çăмăл ĕç тееймĕн. Çапах та пралук çетка каюраран хӳтĕлет.

● Каюра çӳрекен тĕп çулсем çине 45° чалăштарса пушă кĕленчесем çĕре чавса лартмалла, анине çĕр çийĕн 3-4 см хăвармалла. Кĕленче анисене тĕрлĕ еннелле тумалла: çил хăш енчен вĕрнине кура кĕленчесем шăхăраççĕ. Çак сасă каюрасене килĕшмест.

● Каюра çӳрекен тĕп çулсем çине пăсăлнă пулă пуçĕсем хумалла. Çĕрĕк шăрша каюра тӳсеймест, хăвăртрах аяккалла тарма тăрăшать.

● Нашатырь спирчĕпе краççын та каюрана хăратмалли витĕмлĕ хатĕр. Краççынпа е нашатырь спирчĕпе кивĕ пусма татăкĕсене нӳрлетмелле те шăтăксене хумалла. Пĕтĕм шăтăксене çакнашкал шăршлă чĕркемсемпе хупмалла. Каюрасем аяккалла куçса кайма кирлĕ.

Каюра шăтăкĕсене шывпа тултарма вара сĕнмеççĕ. Мĕншĕн тесен ку ĕç валли шыв нумай кирлĕ пулать. Çав тĕлти тăпра нӳрелсе тăрать, каюра çĕнĕ туннельсем чавса нӳрĕкрен хăтăлма тăрăшать.

## "Ылтăн" улăм пĕрчи

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./

– Ăсталанă япаласене вырнаçтарасси хăй пĕр калаçу. Малтан эпир хамăрăн ĕçсене тĕрлĕ лавккасене сутма параттăмăр. Анчах кун пек чухне ĕç укçи хăçан алла тытасси паллă мар. Кайран Атăл хĕрринче, кӳлмекре, хам сутă тума тытăнтăм. Нумай халăх иртет сентре умĕпе, пĕрисем кăсăкланаççĕ, ыйтаççĕ. Кăсăкланакансене çавăнтах мастер-класс кăтартатăп. Акă, çак чăваш символикиллĕ шăнкăрав пирки миçе хут халап каласа кăтартман-ши халăха? Чăвашсен «Виç хĕвел» легендипе хатĕрленĕ шăнкăрав вăл, чылайăшне килĕшет. Туристсем те асăнмалăх туянаççĕ. –Калаçăва тăсать Василий Геннадьевич.

**– Ӳнерçĕсен е алĕç маçтăрĕсен союзĕнче тăратăр-и?**

– Халĕ ниçта та тăмастпăр. Алĕç ăстисен гильдине йĕркеленĕ чухне хастарсенчен пĕри пулнă. Маçтăрсене пуçтарса пуху йĕркелерĕмĕр, устав йышăнтăмăр т.ыт.те. Ку ĕçре манăн маçтăрсене пуçтарас яваплăх пулчĕ те, – сăпайлăн сăмахлать кун пирки Василий Геннадьевич.

Шăнкăрав хыççăн шкул ачисем чупса килчĕç тĕрлĕ алĕç япалисемпе пуян класа. Ачасем хăпартланнинчен вĕсене кунта килĕшнине туйрăм. «Каникулта та çӳреççĕ вĕсем кунта, учительсен каникул çук вĕт. Ачасене килме нихăçан та чарман», – сăмахлать вашават ертӳçĕ Вера аппа. Ăстасем малашлăхра çĕнĕ кĕнеке кăларас шухăшпа хастарланаççĕ. Унта улăмпа çыхас ĕç йĕркине тĕплĕн уçса парасшăн. «Пире те вĕрентнĕ, пирĕн те вĕрентмелле çамрăксене. Ĕç вăрттăнлăхне нихăçан та пытарман. Тĕрлĕ çĕрсенчи маçтăрсемпе çыхăну тытатпăр. Хамăрăн вĕренекенсем çак ĕçе аталантарни савăнтарать. Ĕçĕ тимлĕхпе, тирпейлĕхпе, чăтăмлăхпа çыхăннăскер. Йăпăр-япăрах ярса илме çук, сахалтан та 3 çул кирлĕ», – пĕлтерет мăшăр.

Мăшăрăн мультфильмпа ĕçленĕ опыт та пур. Свердловск киностудийĕнче «Çерçи», «Кутх и мыши», Беларусьфильмри «Труба» мультфилĕмсене ӳкерме хутшăннă вĕсем.

Хальхи вăхăтра вара алĕç ăсталăхĕ ытларах энтузиастсем çинче тытăнса тăрать. Хамăра çеç шанмалла текен шухăша палăртать Василий Геннадьевич. Тата сутă тунă майăн халăха сăнанипе паллаштарчĕ. Çынсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ. Уççисем – вĕсене хĕвел шевли тесе палăртмалла, хупписем – кусем улиткăсем пекрех, асăрхануллă. Уççисем интересленме именмеççĕ, ыйтаççĕ, тытса пăхаççĕ. Теприсем вара калаçмаççĕ. Вĕсем ытларах çын калаçнине итлесе тăраççĕ те çухалаççĕ иккен. Вĕсене кăсăклантарма йывăртарах-мĕн.

Ăстасем хăйсен ĕçĕпе кăсăклантарма пĕлни паха. Чун туртăмне таптаса пысăк укçа хыççăн талпăнман вĕсем. Хăйсен вăйĕпе аталанса çынсене те май килнĕ таран çак ĕçпе паллаштарасшăн. Май тупса улăм пĕрчинчен çыхас ĕçе халăхра сарасшăн. Çак пархатарлă тĕллевре ӳсĕмсем тума сунса сывпуллашрăм тарават хуçасемпе.

## Сиплевçĕ



### Хăва

Хăва пирĕн тăрăхра лайăх çитĕнекен йывăç. Вăл шыв-шурлă вырăна уйрăмах юратать.

Хăва – сиплĕ йывăç. Çуркунне 6 çула çитнĕ хăва турачĕсен хуппине тата çамрăк вĕтĕ турачĕсене типĕтсе хатĕрлемелле. Типĕтме хатĕрленĕ хупă пит хулăн пулмалла мар. 1-4 мм хулăнăш пулсан аван. Тураран вистенĕ хупăна хĕвел çинче кушăхтармалла, унтан 40-60° температурăра типĕтмелле. Типĕтнĕ хупăна картун курупкăсенче 4 çул упрама юрать.

Хăва хуппинче салицин ятлă сиплĕ вещество пур. Шăпах çавна кура хаклă та вăл. Хăва хуппинчен XIX ĕмĕртех салицил кислоти кăларма пуçланă. Унран аспирин хатĕрленĕ.

Хăва хуппине вĕретсе тунă сиплĕ шыв хальхи синтетика аспиринĕнчен чылай усăллăрах. Хăвари салицин ыратнине ирттерме, ӳт температурине чакарма, чир аталанассине чарма пулăшать. Хăва отварне шăнса пăсăлсан, пуç ыратсан, шăк хăмпи, хырăмлăх, пыршă чирĕсем чухне ĕçмелле.

Шăмă чирĕсенчен – артрит, ревматизм т.ыт.те – сипленнĕ чухне те хăва хуппи пулăшать.

Халăхра хăва хуппипе анлă усă кураççĕ. Хăшпĕр рецептсене сĕнетпĕр. Шăнса чирлесессĕн 1 апат кашăкĕ типĕтсе вĕтетнĕ хăва хуппине 250 г шыва ямалла, вăйсăр çулăм çинче 5 минут вĕретмелле, хупласа лартмалла. Шĕвеке кунне 4-5 хут пĕрер апат кашăкĕ апатчен ĕçмелле. Типĕтнĕ хăва хуппине çăка чечекĕпе, хăмла çырлипе, анăс курăкĕпе е вăррипе хутăштарса хатĕрленĕ сиплĕ шĕвек те шăнса чирлесен аван пулăшать. 1 апат кашăкĕ хутăша 250 грамм вĕрекен шыва ямалла, хупласа лартмалла. Ăшăлла 2-3 апат кашăкĕ ĕçмелле. Хăва хуппин отварĕ сыпă чирĕсенчен те аван пулăшать. 1 апат кашăкĕ вĕтетнĕ хупăна 250 грамм вĕретнĕ шывпа хутăштармалла. 30 минут шыв мунчинче тытмалла, шывĕ вĕресе хухсан малтанхи шая çитиччен вĕретнĕ шыв хушмалла. Шĕвеке 3-5 хутчен апатчен çур сехет маларах 2-3 апат кашăкĕ ĕçмелле.

Çак шĕвек варвитти чухне те аван пулăшать.

Пуç ыратнă чухне типĕтнĕ хăва хуппине шывпа кăшт çемĕçтермелле те çамка çине е лĕпке тĕлне хурса тутăрпа çыхмалла.

Хăва хуппипе ӳт-тир чирĕсенчен, пуç лĕкĕленсен, пĕчĕк сурансем пулсан та сипленме юрăхлă.

## Çăкăр пĕçеретпĕр. Тăварсăрах

Çур литр шыв илмелле. Унта 1 апат кашăкĕ пыл, 1 чей кашăкĕ çĕпре ямалла. Вĕсем ирĕлнĕ хыççăн 2 килограмм ыраш çăнăхĕ тата 250 грамм шăтарнă тулă е сĕлĕ пĕрчисем хушмалла. Лайăх çăрмалла, 1 е 2 çавра çăкăр тумалла. Хăпариччен духовкăра 100° температурăра тытмалла, алăкне кăштах уçмалла. Чуста хăпарсан температурăна хушмалла. Духовкăра çăкăра 1 сехетрен каярах тытмалла. Çăкăр пиçсен пичĕ кăштах çемĕçтĕр тесе çу сĕрмелле. Чустана вĕтетнĕ мăйăр, финик, иçĕм, хура слива... кам мĕн килĕштерет, çавна хушма юрать.

Сăмах май, тăвар сиенлĕ пулин те организмра вăл çитменни япăх витĕм кӳрет. Лĕклентерет, вăй чакнă пек туйăнать, ывăнтарать. Эппин, мĕнле тăвар çимелле-ха? Тинĕс тăварĕ пахарах. Унта хлор та, натри те, ытти минералсем те, организма кирлĕ металсем те пур.



## ÇАНТАЛĂК

### КУН ТĂРШШĔ

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 16.04 | + 8 | + 5 |
| 17.04 | + 6 | 0 |
| 18.04 | + 9 | + 1 |
| 19.04 | + 9 | 0 |
| 20.04 | + 10 | – 2 |
| 21.04 | + 8 | – 1 |
| 22.04 | + 9 | + 1 |

| | | Уйăх кунĕ |
|---|---|---|
| 16.04 | 14.13 | 29 у.к. |
| 17.04 | 14.18 | 30 у.к. |
| 18.04 | 14.23 | çĕнĕ уйăх |
| 19.04 | 14.27 | 2 у.к. |
| 20.04 | 14.32 | 3 у.к. |
| 21.04 | 14.36 | 4 у.к. |
| 22.04 | 14.41 | 5 у.к. |

Кун тăршшĕ 14 сехет те 41 минут пулать, 7 сехет те 41 минут вăрăмланать.

## Удобрение «ЗДРАВЕНЬ ТУРБО»: только плюсы



Удобрения «Здравень» считаются одними из лучших для подкормки овощных, садовых и цветочных культур. Их отличает быстрая и полная растворимость в воде, гарантия быстрого поступления питательных элементов в растение. Оптимальное сочетание макро- и микроэлементов для каждой культуры гарантирует отличный и быстрый результат.

«Здравень» помогает развитию корневой системы, увеличивает число и площадь побегов и листьев, количество завязей и плодов. Благодаря удобрению «Здравень» скороспелые сорта быстрее созревают, в плодах и овощах накапливаются больше сахаров и витаминов, улучшается вкус, повышается лежкость. У капусты увеличивается вес и плотность кочана, лук дает более крупные луковицы. По наблюдениям специалистов, «Здравень» повышает урожай на 17-20 %. Цветочные культуры, в т.ч. комнатные, отзываются на подкормку «Здравнем» длительным и обильным цветением, цветы и листья приобретают яркую окраску.

«Здравень турбо» - быстрый и отличный результат!

*На правах рекламы.*

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**Изготовление в короткие сроки.**
**Гарантия качества** **Скидки до 30 %**
**Тел. 89176594701.**

## ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**28.Вăкăр,** ěне, **тына, сысна амисем.** Т. 8-927-999-37-37.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89603109878.

**50.Коров.** Т. 89278508564.

**108.Тёлок, коров.** Т. 8-937-014-49-97.

**729.КРС** – по высоким ценам. Т. 8-906-132-76-04.

## ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**32.Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатно. С 8 до 19 ч., сб., воскр. с 8 до 13 ч. А., Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.** *Лиц. ЛО 21-01-001-096 от 06.06.2014 г. МЗ СР РФ. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**36.Известный чебоксарский экстрасенс, хиромант** – сниму порчу, поставлю защиту, помогу в решении семейных и финансовых проблем. Т. 89063808628.

**38.Чистка колодцев.** Т. 8-961-342-90-59.

**46.Бурение** колодцев, **углубление; продажа** и **д-ка** ж/б колец. bur.21.ru. Т. 89053434207.

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца** колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**57.Свадьбы, юбилеи** – тамада, диджей, «Уяв». Т. 8-937-375-63-78, Мила.

**70.ОКНА, ДВЕРИ, ПОТОЛКИ.** Доступные цены. Договор, гарантия. Замер и консультация – бесплатно. Т. 89170788391.

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 89033220479.

**191.Обшивка сайдингом, утепление, кровля.** Т. 462777.

**197.Бурение скважин на воду.** Опыт, качество. Т. 89656876888.

**246.Бурение скважин на воду** до 50м. Чистка старых скважин. Т. 8-906-381-60-37.

## ĚÇ РАБОТА

**54.МОНОЛИТЧИКИ, КАМЕНЩИКИ** – в Подмосковье. Т. 89176737773.

**102.Требуются монолитчики** – в Москву. Жильё, 3-разовое питание предоставляются. Оплата сдельная, в конце вахты – от 55-65 т.р. Т.: 8-937-013-48-95, 8-927-868-34-68.

**126.Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда, вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**249.Требуются рабочие** в свинокомплекс в Ленинградскую область. З/п 1500 в день. Вахта. Подробно по т. 89278496359.

## СУТАТĂП ПРОДАЮ

**248.Пчелосемьи, улья.** Т.: 8-927-868-73-02, 8-927-857-33-85.

**РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ**
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчě, 13-мěш çурт, 316-мěш пӳлěм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

## С У Т А Т Ă П   П Р О Д А Ю

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900р., прихожие от 3600р., шкафы от 3300р., комоды от 2300р., столы от 1000р., кровати от 4000р. Доставка, сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24. **Сайт:** www.ex-comfort.ru.

**2.Акция! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб.; **песок,** гравмассу. Высокое кач-во. Д-ка. Т. 89603073151.

**3.Акция! Кольца колодезные** диам. – 0,7 м, 1 м, 1,5 м; **песок,** гравмассу. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89603073151.

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. Т. 8-987-576-65-62.

**5.БЛОКИ** керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные, заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, **документы.** Т. 8-960-301-63-74.

**6.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, ВИТЫЕ ТРУБЫ.** Т.: 89278441501, 674642.

**7.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит – дёшево. Д-ка. Т. 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 8-903-358-30-21.

**10.Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич, песок.** Т. 8-961-339-33-63.

**17.Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, сажалки, **копалки,** окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 8-927-853-3596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-8556.

**28.КИРПИЧ** красный, силикатный, **гравмассу,** щебень, **керамзит,** песок, кольца, **к/б блоки.** Т. 8-927-862-91-66.

**29.Плуги,** опрыскиватели, **косилки,** грабли, **картофелесажалки,** погрузчики, доильные аппараты. **ДОСТАВКА!** Т.: 8-937-955-98-02, 8-937-375-80-95.

**30.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**33.Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

**34.Гравмассу,** песок, **щебень, керамблоки.** Доставка до 25 тн. Т.: 89176500385, 89603073399.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**43.БРУСЧАТКУ, плиты** тротуарные, **бордюры, водостоки.** Укладка. Т. 8-967-470-27-36 /Мир камней, Чебоксары, пр. Машиностроителей, 1Д/.

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 8-906-381-44-20.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 89053447932.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Низкие цены. Тел. 48-16-54.

**71.ПИЛОМАТЕИАЛ** /хвоя, береза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова, горбыль.** Т. 89033891400.

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.Срубы** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.

**86.ОКНА** от 4900 р.; **ДВЕРИ** стальные от 9900 р. **Гарантия** производителя. Замер – бесплатно. Звоните по тел. 89379549245.

**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. **Доставка.** Документы. Т. 89373866629.

**93.Кирпич красный** одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, **половняк, КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.



**95.ТРУБЫ ВИТЫЕ,** офактуренные; **кованые элементы** в ассортименте. Т. 8-927-844-15-01.

**111.ТЕПЛИЦЫ от производителя из поликарбоната.** Д-ка. Уст-ка. Скидки. Т. 89876667423.

**112.ТЕПЛИЦЫ от производ-ля.** Д-ка. Установка. Т. 89875751707.

**120.ПЕНОПОЛИСТИРОЛ–ПЕНОПЛАСТ,** теплоизоляционный материал. **НИЗКИЕ ЦЕНЫ.** ДОСТАВКА. Прием заказов по тел. 8-917-078-99-45.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**132.УЛЬЯ новые.** Т. 89603091414.

**133.СЕТКУ–РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, сетку сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку, столбы.** Доставка. Т.: 683045, 89379522211.

**137.Месячных бычков** на откорм по 8000 р. Доставка по ЧР. Т.: 89176641716, 89196690171.

**138.ОКНА, ТЕПЛИЦЫ, обшивка** домов, двери /сталь/. Гарантия 15 л. Скидки 40 %. Т. 89196624097.

**141.СРУБЫ** /6х3,4х3/ + **комплектация.** Тел. 8-937-396-91-01.

**143.ТЕПЛИЦЫ от производителя** – от 5950 руб. Т. 89276682828.

**154.ОКНА и ПОТОЛКИ** – немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. Пенсионерам скидки. Т. 89176627164.

**170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.

**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.

**174.МОГИЛЬНЫЕ ОГРАДЫ, заборы, ворота** и др. изделия от производителя. Т. 89276682828.

**178.Гравмассу, песок, керамзит,** бой кирпича, **щебень.** Пенсионерам – скидки. Т. 89176769379.

**180.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, **муку.** Доставка. Т. 89373916016.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**188.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-927-846-24-10.

**190.ТЕПЛИЦЫ** от производителя – 5700 р. Т. 89022872777.

**192.ДОМ** в Моргаушском районе. Т. 8-965-686-45-52.

**194.**В мешках и россыпью **навоз, торф, песок.** Т. 89276682590.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.



**211.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** 3х4, 3х6, 3х8, 3х10. В наличии. Доставка по ЧР. **Тел.: 48-08-23, 36-06-16.**

**224.Тёлок** стельных, **быка, овец** породистых, парочку пони. Т. 8-927-998-82-27.

**225.Трактор** МТЗ-80, МТЗ-82, ГВК-6, пресс-подборщик, Волга-2, плуг, **сеялку, культиватор, шерстобойку.** Т. 89279988227.

**230.Цыплят, кур** разных пород, **индоуток,** цесарок, перепёлок, **индюшат.** Т. 89613420088.

**231.**Ленточные **пилы по дереву.** Дисковые и рамные пилы. **Станки.** Т. 8-927-668-02-12.

**232.Заменитель цельного молока** для телят и поросят. Т. 89876681717.

**235.Оборудование и запчасти:**
***для птицеводства*** – инкубаторы, кормушки, поилки и др.;
***для животноводства*** – агрегаты индивидуального доения АИД, «Коза», доильные аппараты, молочные фляги, молокомеры, маслобойки, транспортеры ТСН, автопоилки, комплектующие узлы к ним и т.д.; насосы погружные скважинные ЭЦВ, вакуумные масляные, водокольцевые, молочные и другое оборудование для села. **ООО «Сельхозтехника»,** г. Чебоксары, Школьный проезд, д. 1, офис 216.
**Тел.: 56-40-73, 56-48-05, моб.: 89176724124, 89278426769.**

**239.**Зааненски ăратри **КАЧАКА ПУТЕКĚСЕМ** тата **ТАКИСЕМ.** Т.: 8-906-384-51-52, 89093031819.

**241.Бетон,** раствор, **ж/б изделия, пиломатериалы.** Д-ка по Чувашии. Т.: 89278535732, 89373918648.

**242.Цемент,** раствор, **бетон,** блоки фундаментные, **керамблоки.** Качество. Т. 216815.

**243.Корзины плетёные из ивы** для хозяйств. нужд. Т. 216815.

«ХЫПАР»

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин “Хыпар” Издательство çурчě” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийě

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

Директор-тěп редактор В.В.ТУРКАЙ
Редактор Э.Н.ИВАНОВА

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĚ:
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчě, 13, Пичет çурчě, III хут, “Кил-çурт, хушма хуçалăх”.
ЫЙТСА ПĚЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:
56-15-30, 56-00-67.
коммерци дирекцийě:
28-83-70,
56-20-07 – инспекторсем.

Факс: /8352/ 28-83-70.
Электронлă почта:
hypar@mail.ru

hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийěсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленě.

15.04.2015. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла. 16 сехетре алă пуснă.

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчě» АУ техника центрěнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АУО типографийěнче пичетленě. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчě, 13. 56-00-23 – издательство директорě.

Тираж 15949. Заказ 1421.